**Улăп евĕр çĕкленер**

*(Чăваш наци конгресне халалласа)*

Авалтан савать тăван çĕршывăм

Пархатарлă Атăл аттене.

Сахал мар вăл курнă вутпа çулăм,

Çичĕ ют килсе алхаснине, —

Чăвашсем ятне яманнине.

Улăп евĕр харсăр çĕкленсе

Малалла утар-и пĕрлешсе.

Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,

Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

Тăхăр тăвăл витĕр тухнă халăх

Ирĕке юратнă яланах.

Чăваш мулĕ — туслăхпа тăванлăх,

Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах —

Пурнăç пилĕ пирĕн çапларах.

Улăп евĕр харсăр çĕкленсе

Чыслăха упрар-и пĕрлешсе.

Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,

Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

Чан çапса вăратрĕ çĕнĕ юхăм,

Шанчăк пур-ха, паттăрлăх пĕтмен.

Çирĕп пултăр утăм хыççăн утăм,

Тĕркелен, мухтавлă Чăваш Ен,

Ыр ĕçпе тĕнче шайне çĕклен.

Улăп евĕр харсăр çĕкленсе

Телее туптар-и пĕрлешсе.

Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,

Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

*Кипеч, А. Улăп евĕр çĕкленер: [сăвă] / А. Кипеч // Тăван Атăл. – 2009. – № 11. – С. 152.*